25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 СЕНТЯБРӖН 27 ВЫРСАРНИКУН 226 (6161) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ӗçе çирӗплӗх организацилер

Отечественнӑй вӑрçӑ пуçлансанах Совет правительстви пирӗн халӑха сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма кирли çинчен асӑрхаттарчӗ, сывлӑшран тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланмалли правилӑсене совет гражданӗсем пурте те вӗренмелли çинчен постановлени кӑларчӗ. Унтанпа çулталӑк ытла иртрӗ. Çак вӑхӑт хушшинче ӗнтӗ ку енӗпе пысӑк опыт пухӑнчӗ. Мускав тата Ленинград хулисенчи ӗççыннисем тӑшман сывлӑшран тапӑннине хирӗç паттӑррӑн тӑчӗç. Нимӗç фашисчӗсен сывлӑшри вӑрӑ-хурахӗсем вилӗм тупрӗç. Сывлӑшран тапӑннинчен сыхланма совет халӑхӗ вӗренсе пычӗ.

Анчах çак ӗçре хӑшпӗр вырӑнта тимсӗрлӗх те нумай-ха. Фронт пирӗнтен инçетре тесе, чылай предприятисен учрежденисен руководителӗсем тӑшман сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ӗçе паянхи кунччен те йӗркелемен. Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗçлекен заводра рабочисемпе служащисене ПВХО правилисене вӗрентме паянхи кунччен те тытӑнман. Уйрӑм предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче граждансен пӗр пайне ПВХО çине вӗрентнӗ, вӗсенчен чылайӑшӗ çак ӗçе отличнӑ вӗренсе испытанисем тытнӑ, анчах тепӗр пайне вӗрентес ӗç халичен те организациленмен. Хуласенчи килхуçи хӗрарӑмӗсене, колхозниксене ПВХО ӗçне вӗрентес тӗлӗшпе Осоавиахим организацийӗсем те, хула тата ялсоветӗсем те сахал ӗçлеççӗ.

Щельсемпе убежищӗсем пирки те çавнах калас пулать. Чылай предприятисемпе учрежденисен çывӑхӗнчи щельсем, сывлӑшран тапӑннинчен пытанмалли вырӑнсем витти мар тата йӗркелӗ мар. Шупашкарти Финанс Халӑх Комиссариачӗн тата «Кооператор» артелӗн çумӗнчи щельсем йӗркеллӗ тытмаççӗ. Çавӑнпа пӗрлех вара никӗмӗн номерлӗ пекарня, Росснабсыт патӗнчи щельсем тӑпрапа тулса ларнӑ.

Çутта маскировка тумалли правилӑсене пӑснисем те пулкалаççӗ. Шупашкарта Водосвет урамӗнчи 14-мӗш çуртра пурӑнакан М. П. Ильина светомаскировка правилисене темиçе хутчен те пӑснӑ, ӑна уншӑн виçӗ çул хушши хупса усрамалла тата икӗ çул çуйлав прави паман. Уйрӑм предприятисен чӳречисен хушӑкӗсем витӗр çӗрле çутӑ курӑнать.

Çак фактсем ӗнтӗ пирӗн ку ӗçре çирӗп йӗркелӗх çукки çинчен калаççӗ. Çак питӗ пысӑк ӗçре ситменлӗхсене хальхи вӑхӑтра нимӗнле те тӳсме юрамасть. Хулисене илсе сывлӑшран тапӑннинчен сыхланма пур енӗпе те хатӗрленсе ситмелле.

Сывлӑшран тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланма правилӑсене вӗрентес ӗçе малалла туса пымалла. Самозащита групписен ӗçӗсене йӗркелесе ямалла, çав группӑсенче тӑракан çынсене хӑйсене тивӗçлӗ ӗçе туса пыма вӗрентмелле. Противогазсемпе усӑ курма, вӗсене тирпейлӗ тытса усрама вӗрентес пулать. Химиллӗ тапӑнуран сыхланма кирлӗ тумтирсене те юсавлӑ усрамалла.

Кашни предприятирех, кашни çуртрах вут тивнине хирӗç кӗрешмелли хатӗрсем, вут тивертекен бомбӑсене сӳнтермелли кӗреçесем, хӗскӗчсем, хӑйӑр, шыв тата ыттисем те пулмалла.

Сывлӑшран тапӑннинчен пытанмалли вырӑнсене (убежищӗсене, щельсене) лайӑх йӗркелесе ситтермелле, çынсем пурӑнма юрӑхлӑ тумалла. Пӗлтӗр алтнӑ щельсене пурне те тасатмалла, витмелле. Хӑш предприятире е çурт çумӗнче щельсем çук, вӗсене çывӑхрех çӗнӗ щельсем алтмалла, убежищӗсем тума хатӗрленмелле.

Хӗл çывӑхарать. Хӗллехи вӑхӑтра вут тивертекен бомбӑсене сӳнтерме шыв тултарнӑ каткасем лайӑх пулӑшаймаççӗ, бомбӑна çийӗнчех унта илсе пӑрахсан вӑл унта та сӳнет. Çавӑнпа та пур çӗрте те хӗллехи вӑхӑтра пӗр каткӑсем тултарнӑ каткасем тултарса усрама хатӗрленес пулать. Çуртсен чердакӗсем çинче типӗ хӑйӑр тултарнӑ ещӗксем пулмалла.

Сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас тӗлӗшпе Шупашкарти МПВО начальникӗ çак кунсенче кӑларнӑ приказ пурнӑçлама пуçланӑ. Çав приказ тӑрӑх сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ӗçе халех пурнӑçлама пуçлаççӗ. Çӗрле хулана пӗтӗмпех тӗттӗмлетмелле. Предприятисене, учрежденисене те ... сыхлас ӗçе вӑй тумалла. ... Шупашкар приказӗ тӑрӑх пирӗн республикӑри ытти хуласенче те сывлӑшран тапӑннинчен сыхланас ӗçре çирӗп йӗркелӗх тӑвас пулать.

ВКП(б) Хӗрлӗ Чутай райкомӗпе ӗççынни депутачӗсен райсовечӗн исполкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулсене пухса кӗртес ӗçре пысӑк ӗç тухӑçлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата пахалӑхлӑ ӗçленӗшӗн ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми çине çаксене кӗртнӗ:

109. **Илья Николаевич Яштайкин** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Профинтерн ячӗпе тӑракан колхозра ӗçлекен вӗренекенсен отрядне ертсе пыракан. Яштайкин юлташӑн отрячӗ 42 гектар çинче пучахсене пуçтарса тухнӑ, çапла отряд мӗнпурӗ 172 килограмм тырӑ пухнӑ. Отряд тӑкӑнса юлнӑ пучахсене халӗ те çаплах пуçтарать.

110. **Иван Никифорович Попов** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Свет» колхозри 3-мӗш бригадӑн бригадирӗ. Попов юлташӑн бригади кӗрхи тырӑсене 6 кун хушшинче пуринчен малтан пухса кӗртнӗ, çавӑн пекех вӑл çуртыррисене те пуринчен малтан çулса пӗтерсе, сентябрӗн 9-мӗшӗ тӗлне капансене хывса лартнӑ, кӗрхи тырӑсене августӑн 20-мӗшӗ тӗлне акса пӗтернӗ.

111. **Ефим Григорьевич Аркадьев** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Хатӗр пул!» колхозри 3-мӗш бригадӑн бригадирӗ. Аркадьев юлташӑн бригади колхозра пӗрремӗш вырӑнта тӑрать. Бригада, жнейкӑсемпе тата çавасемпе анлӑн усӑ курса, тӗштырӑ культурисене 9 ӗç кунӗ хушшинче пухса кӗртнӗ, сентябрӗн 2-мӗшӗ тӗлне капансене хывса пӗтернӗ. Ку бригадӑра тӑкаксем пулассипе чӑн-чӑнах вӑйлӑн кӗрешеççӗ.

112. **Елена Петровна Вазикова** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Коминтерн ячӗпе тӑракан колхозри 2-мӗш бригадӑн бригадирӗ. Вазикова юлташӑн бригади яланах малта пырать, уборка пуçланнӑранпа колхозӑн куççа çӳрекен Хӗрлӗ ялавне аларан вӗçертмест. Бригада тырпулсене пухса кӗртсе капана хывса пӗтернӗ, кӗрхи тырӑсемпе пӑрçа йышши культурӑсене çапса пӗтернӗ, кӗрхи тырӑсене августӑн 20-мӗшӗнче акса пӗтернӗ.

113. **Евдокия Михайловна Афанасьева тата Агрипина Васильевна Ефимова** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Коминтерн ячӗпе тӑракан колхозри колхозницӑсем. Афанасьевӑпа Ефимова юлташсем кӗрхи тырӑсене вырса пухнӑ чухне кашнийӗ кунсеренех 2-шер норма тултарса пынӑ, çуртыррисене пуçтарнӑ чухне вӗсем кашниех кунсерен 0,30 гектар çулса хӑйсемех кӗлте çыхса пынӑ.

МТС-сен Политотделӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, пысӑк ӗç тухӑçлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата машинӑсемпе тракторсен паркӗпе лайӑх усӑ курнӑшӑн ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми çине çаксене кӗртнӗ:

Комсомольски МТС тӑрӑх:

114. **9-мӗш номерлӗ трактор бригади** (бригадирӗ **З. Г. Саландаев** юлташ). Вӑл трактор ӗçӗсен çулталӑкри планне, çемçе суха çине куçарса шутласан, авӑн çапассисӗр пуçне, 110 процент тултарнӑ, 320 килограмм горючи перекетленӗ.

115. Комбайнер **Галимзян Шакурович Иштяков.** Вӑл «Коммунар» маркӑллӑ комбайнпа ӗçлесе 400 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнӑ, планра 200 гектар кӑтартнӑ пулнӑ, 220 килограмм горючи перекетленӗ.

Графика пурнӑçласа пымаççӗ

КАНАШ, сентябрӗн 25-мӗшӗ. **(Хамӑр корр.).** График тӑрӑх кӗрхи çӗртме тунӑ çӗрте районра кулленех 956 лаша ӗçлемелле, вӗсем куллен 575 гектар сухаламалла. Анчах кӗрхи çӗртме тумалли график халь нумай колхозсенче пурнӑçланса пымасть. Сентябрӗн 23-мӗшӗ тӗлне районри колхозсем пурӗ те 811 гектар çеç сухаланӑ.

Кӗрхи çӗртме тӑвас ӗç Доронин ячӗпе тӑракан колхозра ытти колхозсенчен лайӑхрах пулса пырать. Анчах кунта та çак ӗçе тума лашасем çителӗклӗ таран уйӑрса паман. Колхозӑн кӗрхи çӗртмене пурӗ 270 гектар çинче туса хӑвармалла пулсан, сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне 94 гектар çеç сухаланӑ. Колхозӑн график тӑрӑх кулленех 20 гектар сухаламалла, анчах çакӑ вӑл пурнӑçа кӗрсе пымасть.

«Комбайн», «Хунав», «Красная Чувашия», «Красная Армия», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем ӗçре питех те кая юлса пыраççӗ. Вӗсем кӗрхи çӗртме пурӗ те 3—5-шер гектар çеç тунӑ. Кая юлнин сӑлтавӗ çӗртме тӑвас ӗçе тивӗçлипе хакламаннинче. Çак ӗçе комсомолецсемпе çамрӑксем те пуçарса пымаççӗ. Кӗрхи çӗртме тӑвас ӗçре чаплӑ пример кӑтартнӑ Валентин Нагорный юлташӑн ӗç опытне сарас тӗлӗшпе районри комсомол организацийӗ нимӗн те туман.

Çӗрулмине хӑвӑрт пухса кӗртмелле

ВӐРНАР. Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ колхозсем паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗçлеççӗ. Катӑшри Чкалов ячӗпе тӑракан, Хирпуçӗнчи «Победа», Сунарти Каганович ячӗпе тӑракан колхозсем авӑн çапас ӗçе хӑвӑрт туса пыраççӗ. Каганович ячӗпе тӑракан колхоз сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне кӗрхи тырӑсене пӗтӗмӗшпех çапса пӗтерчӗ, государствӑна тырӑ памалли обязательствӑна пурнӑçларӗ. Халӗ çурхи тырӑсене çапас ӗç ӑнӑçлӑн пулса пырать. Колхозниксем социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыççӑн уйрӑмах лайӑх ӗçлеме пуçларӗç. Авӑн çапнӑ çӗрте М. Миронов, Е. Сергеева колхозниксем икӗ кун хушшинче 12-шер ӗçкунӗ ӗçлесе илнӗ.

Катӑшри Нарышкин юлташ ертсе пыракан колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пӗри пулса тӑрать. Колхоз çитес кунсенчех авӑн çапса пӗтерет, государство умӗнчи обязательствӑсене 1942 çулшӑн парса татса, 1943 çулӑн пӗрремӗш кварталӗшӗн те панӑ.

Çӗрулмипе пахча-çимӗçсене пухса кӗртес ӗç те хӗрӳллӗн пулса пырать. Сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне районри колхозсем çӗрулмине 70 процент кӑларса пуçтарнӑ. Анчах та районра çӗрулми кӑларас ӗçе тытӑнман колхозсем те пур-ха. ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ ку тӗлӗшпе конкретнӑй кӑтартусем панине пур çӗрте те кирлӗ пек пурнӑçласа пымаççӗ-ха. «Апнер» колхоз пахча-çимӗçсемпе çӗрулмине кӑларма халӗ те тытӑнман. Колхоз председателӗ Васильев юлташ ӗç дисциплинине çирӗплетсе уборка ӗçӗсене ӑнӑçлӑн вӗçлессишӗн тӑрӑшмасть.

Пахча-çимӗçсене тухӑçлӑн ӳстерсе илес тӗлӗшпе «Память Ленина» колхозӑн Ф. Кустин ертсе пыракан бригади темиçе çул хушши ӗнтӗ паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗçлет. Кӑçал та бригада пысӑк тухӑçлӑ пахча-çимӗç туса илчӗ.

Вӗсене лайӑх пухса кӗртессишӗн колхозниксем халӗ куние-çӗрне пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Колхоз пахча-çимӗçсене пухса кӗртес ӗçе куçса килнӗ çынсене те активлӑн хутшӑнтарнӑ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе нумай вӑй хумалла

КУСЛАВККА, сентябрӗн 24-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçлеççӗ. Пӗтӗм районӗпе илсен, кӑçал колхозсен фермисенче мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем 2.760 пуç пулмалла пулнӑ. Çак плана паянхи кун тӗлне пурӗ те 83 процент çеç тултарнӑ. Ытти выльӑхсем енӗпе илсен, ӗç пушшех те начар тӑрать. Район сысна амисем ӗрчетес плана 65 процент, сурӑхсем ӗрчетессине 64 процент кӑна пурнӑçланӑ.

Кӑçал выльӑх-чӗрлӗхсем валли 50 вите ремонтлама палӑртнӑ пулсан, халӗ 32 вите кӑна ремонтласа пӗтернӗ. «Первая пятилетка», «Путь Ленина», «Ударник», «Новый путь», «Новая жизнь», «Заря», «Красный Волгарь» тата ытти колхозсенче витесене ремонтлама тытӑнман. Районра ремонт тӑвас тӗлӗшпе организациленӗ 51 бригадӑран 26-шӗ кӑна ӗçлеççӗ.

Калас пулать, малта пыракан колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планӗсене тултарса, выльӑхсем валли çителӗклӗ таран апат-çимӗç хатӗрлерӗç, витесене ремонт туса пӗтерчӗç. Кун пек колхозсен шутне Аманикри «Динамо» (ферма заведующийӗ Рускин юлташ), Варасӑрти «Правда» тата «Красноармеец» колхозсене кӗртмелле. Асӑннӑ колхозсем выльӑх витисене пурне те ремонтласа çитернӗ, выльӑхсем валли апат та çителӗклӗ таран хатӗрлесе хӑварнӑ.

Е. НИКОЛАЕВА,
Райçӗрçӗ пайӗн старши зоотехникӗ.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

2—3-шер норма тултараççӗ

КУСЛАВККА, сентябрӗн 26-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту комбинатра кунран кун саралса пырать. 70-мӗш номерлӗ заводри рабочисен чӗнӗвӗ çине ответлесе, цех коллективӗсем хӑйсем çине талӑклӑ обязательствӑсем илнӗ. Пушкин юлташ начальник пулса ертсе пыракан цех коллективӗ, сӑмахран, çак уйӑхри плана 29 кун хушшинче тултарма, октябрьти плана 150 процент тултарма, пӗр браксӑр ӗçлеме пулса обязательство илнӗ. Унсӑр пуçне, цехри рабочисемпе работницӑсем пурте нормӑна тултарса ӗçлеме пулнӑ. Халӗ чылайӗшӗ хӑйсен нормисене иртерсе тултараççӗ. Е. Харинский, Кутузов, Береговой, Бобров стахановецсем 2—3-шер нормӑна çитереççӗ.

Цехри кашни рабочи Октябрь уявӗччен стахановецсен ретне тӑрассишӗн кӗрешет.

В. НОВИКОВ,
Комбинатри завком председателӗ.

Стахановецсем ӗç тухӑçлӑхне ӳстерчӗç

ÇӖМӖРЛЕ. **(«Чӑваш Коммуни» корр.).** Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыççӑн комбинатри рабочисемпе работницӑсем хӑйсен ӗç тухӑçлӑхне татах ӳстерчӗç.

Петров юлташ ертсе пыракан цех коллективӗ çак уйӑхра ӗç тухӑçлӑхне 6,3 процент ӳстерме, продукцин хӑйне ларакан хакне 2 процента яхӑн чакарма тата иртнӗ уйӑхринчен 40 процент ытларах продукци туса кӑларма обязательство илнӗ. Çак обязательствӑна ӑнӑçлӑн пурнӑçлас тесе халь рабочисем ырми-канми ӗçлеççӗ. Чылайӗшӗсем хӑйсен нормисене 2—3 хут иртерсе тултараççӗ. Коммунист Димитриев юлташ, çӗнӗ профессипе ӗçлесе, ӗç нормине 350 процент таран тултарать. Шелкова, Волкова, Михайлова юлташсем машиннӑй отделенире ответлӑ заказсем тӑваççӗ. Çамрӑк работницӑсем уйӑх каялла ӗç тухӑçлӑхне 2 хут ӳстерсе ӗçленӗ, сентябрӗн малтанхи 20 кунӗ хушшинче вара вӗсен ӗç тухӑçлӑхӗ 2,5 хут ӳсрӗ.

Цех коллективӗ çирӗп график тӑрӑх ӗçлет. Вӑл кашни кунах заданисене иртерсе тултарать.

Х. ЛИСИН.

Чугунçула юсас тӗлӗшпе пыракан вунӑкунлӑх

КАНАШ, сентябрӗн 26-мӗшӗ. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Хусан чугунçулне юсама пулӑшас тӗлӗшпе сентябрӗн 20-мӗшӗнчен вара фронтовой вунӑкунлӑх пырать. Вунӑкунлӑха Канаш хулинчи служащисем тата Канаш районӗнчи колхозниксем активлӑн хутшӑнчӗç. Чугунçул çинче ӗçлеме хуларан 170 çын, колхозсенчен 109 çын пынӑ. Уйрӑмах «Мотор» тата Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсенчен пынӑ колхозниксем тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Вӗсене Кармами ялсовет председателӗ Кириллов, Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Тихонов юлташсем хӑйсем ертсе пыраççӗ.

Хула çыннисенчен Госбанкӑн Канашри отделенийӗн, «Швейник» тата «Красный Воин» артельсен коллективӗсем лайӑх ӗçленине палӑртмалла. Госбанк отделенийӗн служащийӗсем М. Ефремовпа К. Пушинский юлташсем тата «Швейник» артелӗн работницисем Платоновӑпа Спиридонова юлташсем ытти ӗçлекенсене пример кӑтартаççӗ.

Фронтовой вунӑкунлӑхӑн малтанхи пилӗк кунӗнче Канаш участокӗнче 310 погоннӑй метр çинче рельсӑсем улӑштарнӑ, 315 погоннӑй метр çинче линисене юсанӑ, 405 кубометр шлак туртарса пынӑ т. ыт. те.

Чугунçула юсас тӗлӗшпе пыракан вунӑкунлӑха Канаш районӗсӗр пуçне Куславкка, Шӑхасан, Вӑрмар районӗсем те хутшӑнмалла. Вунӑкунлӑхра ӗçлеме вӗсен кашниннех куллен 50-шар çын парса тӑмалла. Анчах вунӑкунлӑхӑн малтанхи кунӗсенче Куславкка районӗ вӑтамран 5-шер çын парса тӑнӑ, Шӑхасан районӗ вара пачах та паман. Вӑрмар районӗ те юлашки вӑхӑтра ӗç вӑйне çителӗксӗр парса тӑма пуçларӗ.

Чугунçула вӑхӑтра юсаса çитересси оборонӑллӑ питех те кирлӗ ӗç. Районсен унта ӗçлеме кирлӗ лашасемпе çынсене çителӗклӗ уйӑрса памалла.

П. НИКОЛАЕВ.

—○—

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

Паркçырминчи (Хӗрлӗ Чутай р.) пуçламӑш шкулта вӗренекенсем канмалли кун вӑрмана кайса 32 килограмм шӑлан çырли пухса пачӗç.

Вӗренекенсем ытти чухне татах та пуçтарма сӑмах пачӗç.

«Çӗнтерӳ çулӗ».

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

И. М. Майский юлташа ЛЕНИН орденӗпе наградӑласси çинчен

Совет государствишӗн питех те палӑрса тӑракан ӗçсем тунӑшӑн Иван Михайлович Майский юлташа, вӑл Совет Союзӗн Англири посолӗ пулса ӗçлени 10 çул тултарнӑ май, **Ленин орденӗпе** наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти сентябрӗн 25-мӗшӗ.

Аначкасси çыннисем А. С. Новиков орденоносец патне янӑ çыру

ИШЛЕЙ. Нимӗç захватчикӗсене хирӗç çапӑçнӑ çӗрте хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн А. С. Новикова Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗ парса наградӑланӑ. Новиков Мамӑш ялсоветӗнчи Аначкасси çынни. Çак кунсенче Аначкассинчи «Коммунист» колхозӑн членӗсен пухӑвӗ хӑйсен землякӗ патне çыру яма йышӑнчӗ. Акӑ вӗсен çырӑвӗ:

Пирӗн паттӑр земляк, эпир, санӑн тӑван ялти колхозниксем, эсӗ хӑюллӑ та паттӑр çапӑçса правительствӑн пысӑк наградине—Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗ илме тивӗçлӗ пулнишӗн савӑнатпӑр тата фашистла тискер кайӑксене хирӗç пыракан çапӑçусенче сана çӗнӗ те паха çитӗнӳсем тума сунатпӑр. Гитлерла йыткӗтӗвӗсене пӗр шеллемесӗр çӗмӗрсе пырӑр. Пирӗн социализмлӑ тӑван çӗршывӑн чыслӑхӗшӗн малашне те геройла кӗреш.

Эпир пурте, пӗр çын пек пулса, отечественнӑй вӑрçӑ кунӗсенче мӗнпур вӑя çӗнтерӳ тума парас кӑмӑлпа ӗçлетпӗр. Пирӗн ӗçри патриотизм калама çук пысӑк, тылри боецсем пулса, эпир тӑшмана тӗппипех аркатса тӑкас вӑхӑта çывӑхартасшӑн тӑрӑшатпӑр. Тӑшмана çапса аркатма кирлине эпир пӗр минутлӑха та манмастпӑр. Тӑшман пирӗн колхоз стройне, пирӗн пуянлӑха пӗтерессшӗн, пире ӗмӗрлӗхех нимӗç баронӗсемпе князӗсен чурисем туса хурасшӑн. Анчах унӑн ӗç тухаймӗ!

Хӑюллӑ земляк Новиков юлташ! Эпир уборкӑра вӑрçӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек ӗçлерӗмӗр. Уйри тырпула пӗр тӑкаксӑр тата кӗске вӑхӑтра пухса кӗртрӗмӗр. Иртнӗ çул уйран кӗлтесене юр çусан тин çунапа турттартӑмӑр пулсан, кӑçал кӗлтесене кӗртсе пӗтертӗмӗр ӗнтӗ. Халӗ хӗрсех авӑн çапатпӑр тата çӗрулми кӑларатпӑр. Кӑçал колхозниксем чӑн-чӑнах тӑрӑшса ӗçлерӗç. Пурте хӑйсен ӗç нормисене 150—180 процентшар тултарса пычӗç. Сирӗн 72 çулхи аннӗр те колхозра çамрӑксенчен юлмасӑр тӑрӑшса ӗçлет. Паянхи куна вӑл 81 ӗçкунӗ тунӑ. Вӑл колхозри пӗр ӗçрен те юлмасть.

Эпир государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра пурнӑçа кӗртме кирлине манмастпӑр. Колхозшӑн аш-какай, сӗт-çу, çӑмарта, çӑм памалли обязательствӑсене пурнӑçа кӗртрӗмӗр. Государствӑна тырӑ памалли обязательствӑсене те çак кунсенчех пурнӑçлатпӑр. Пирӗн колхозӑн 4 ферма, эпир пур фермӑсем енӗпе те государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне ытлашшипех тултартӑмӑр.

Пирӗн земляк, эсӗ тӑшмана малашне те пӗр хӗрхенмесӗр пӗтерсе пыр, пирӗн халӑхран мӑшкӑллама ан пар. Эпир кунта çӗнтерӳ валли мӗн кирлине пурне те тӑватпӑр. Çулпуç Сталин юлташӑн кӑтартӑвӗсене çирӗппӗн пурнӑçласа пыратпӑр. Пирӗн умри чыслӑ ӗç вӑл—тӑван Хӗрлӗ Çара нумайрах пулӑшасси. Эпир Хӗрлӗ çар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас тӗлӗшпе те лайӑх ӗçлетпӗр. Паянхи куна 45 тир, 25 килограмм çӑм, алшишсем, чӑлхасем пухрӑмӑр. Çапла ӗнтӗ, эпир этемлӗхӗн усал тӑшманне — Германи фашизмне пӗтерсе тӑкас шухӑш-кӑмӑлпа ӗçлетпӗр. Салам сана, пирӗн мухтавлӑ земляк А. С. Новиков!

Пуху хушнипе:
Колхоз председателӗ К. ФЕДОРОВ, ялсовет исполкомӗн председателӗ П. РЫКОВ, комсомол организаци секретарӗ С. СМИРНОВА, колхозӑн бригадирӗ Н. ИВАНОВА, колхозниксем: Г. СМИРНОВ, К. ТОЛСТОВА, П. СЕМЕНОВА.

Сталинград районӗнчи çапӑçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрӗн 25-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Сталинград хӗрринчи урамсенче вӑйлӑ çапӑçусем пыраççӗ, çавӑн пек çапӑçусене урамри çапӑçусен историйӗ курман-ха. Хула районӗнче хаяр тытӑçусем пӗр минутлӑха та чарӑнса тӑмаççӗ. Снарядсемпе авиабомбӑсем çурӑлнипе çӗр тӑтӑшах чӗтресе тӑрать, пулеметсемпе винтовкӑсен сасси танксем кӗмсӗртетнӗ тата самолетсем шавланӑ сасӑра йӑлтах çухалса каять.

Тыткӑна лекнӗ фашистсем каланӑ тӑрӑх, Гитлер хӑйӗн генералӗсене Сталинграда август уйӑхӗнчех илме хушнӑ. Генералсем Гитлера çилентерессинчен хӑраса, салтаксене те, танксене те, авиацие те шеллесе тӑман. Атӑл çинчи крепость патне пымалли вырӑнсенче хӑйсен чи лайӑх дивизийӗсене пӗтерсе хунӑ, пиншер гитлеровец Сталинград патӗнче темиçе кун хушши пынӑ çапӑçусенче хӑйсен пуçӗсене хунӑ. Генералсем урса кайнӑ фюрерӑн приказне пурнӑçа кӗртеймен. Хула халӗ те çапӑçать, фашистсен çӗнӗ те çӗнӗ дивизийӗсене пӗтерсе пырать. Хулана хӳтӗлекенсем кашни урамшӑн, кашни переулокшӑн халиччен пулман пек хастарлӑхпа çапӑçаççӗ.

Акӑ ӗнтӗ ӗнер те Н-ски чаçӑн гвардеецӗсем, хула оборонин пӗр паха рубежне хӳтӗлесе тӑрса, пӗр кун хушшинче противникӑн 2 атакине сирсе янӑ. Кашни атака умӗн артиллерипе минометсем вӑйлӑн персе тӑнӑ. Гвардеецсен позицийӗсем çине темиçе тонна металл пӑрахсан, нимӗçсен командованийӗ мала танксем янӑ, танксен брони хыçӗнче пытанса, атака тума гитлеровецсен пехоти пынӑ.

Гвардеецсем танксене çывӑха янӑ та вӗсене орудисемпе тӳррӗн пере-пере çӗмӗрнӗ. Пушарсен çути ӳкнӗ пӗлӗт патнелле нимӗçсен çунакан танкӗсенчен тӗтӗм мӑкӑрланса хӑпарнӑ. Фашистсем гвардеецсен оборона рубежӗсем патнелле çывхарса пынӑ май çапӑçӑва бронебойщиксем, противотанковӑй гранатӑсемпе хӗçпӑшалланнӑ боецсем хутшӑннӑ. Çуртсен çийӗсемпе подвалсенчен тата чӳречесенчен çунакан шӗвек тултарнӑ бутылкӑсем вӑркӑннӑ. Хӑтӑлса юлнӑ танксем чанкӑртатса каялла пӑрӑнса кайнӑ. Çапла вуникӗ хутчен атакӑланӑ, пирӗннисем пур атакӑсене те сирсе янӑ. Хастарлӑ гвардеецсем 42 танк пӗтерсе тӑкнӑ, пӗр утӑм та каялла чакман.

Çав çапӑçра противотанковӑй туппӑн наводчикӗ Кузнецов юлташ уйрӑмах палӑрнӑ. Аманнӑскер, вӑл тӑшманӑн атакисене çаплах сире-сире пынӑ, пӗр кун хушшинче фашистсен 3 танкне сунтарса янӑ. Дербенко, Фатун тата Епрюков ертсе пыракан бронебойщиксен расчечӗсем çирӗплӗхпе мастерлӑх кӑтартнӑ.

Противник Сталинградӑн çурçӗр-хӗвеланӑç хӗррине хаяррӑн атакӑланӑ. Самолетсем çинчен вӑйлӑн бомбӑсем пӑрахса тӑнӑ хыççӑн тӑшманӑн темиçе вуншар танкӗ автоматчиксемпе пӗрле переулокпа пырса хулан пӗр урамне кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Вӗсемпе чи малтан бронебойщиксем çапӑçма тытӑннӑ. Çуртсен ишӗлчӗкӗсем хыçӗнче тӑрса тӗл персе вӗсем, 5 танка çунтарса янӑ, çак танксенчен иккӗшне бронебойщик Мальцев пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗçсем нумай вӑхӑт хушши çапӑçнӑ хыççӑн переулока кӗрсе кайсан, вӗсене унта артиллерист-сержантсем Носов тата Астапаев хирӗç тӑнӑ. Вӗсем тӑшманӑн машинисене тӳррӗн пеме тытӑннӑ. Татах 7 танк çухатсан, гитлеровецсем зара каялла пӗрхӗннӗ. Тепӗр урамра нимӗç автоматчикӗсем Голубевӑн артиллери батарейине виçӗ енчен çавӑрса илме пултарнӑ. Артиллеристсем алла винтовкӑсемпе автоматсем тытса кӗрешме тытӑннӑ. Вӗсем вӑйлӑн çапӑçнӑ. Фашистсем, пысӑк çухатусем тӳссе, каялла кайнӑ. Пӗр минутӑран батарейӑна танксем атакӑланӑ. Артиллеристсем çӗнӗрен орудисем патне тӑнӑ. Вӑйлӑн персе тӑрса, çав атакӑна та сирсе янӑ.

Хулан çурçӗр-хӗвеланӑç хӗрринче пирӗн войскӑсем ӗнер нимӗçсене каллех каялла чакарнӑ, вӗсенчен меллӗ позицие тытса илнӗ.

Тӑшман пехотин батальонӗ пирӗн икӗ подразделени хушшипе кӗрсе кайсан, ӑна Чернов ертсе пыракан 12 боец çул пӳлсе лартнӑ. Вӗсем, иккӗленсе тӑмасӑр, танмар çапӑçӑва кӗрсе кайнӑ. Пӗлсе çапӑçакан тата пиçӗхнӗ воинсем тӑшмана 5 сехет хушши чарса тӑнӑ, ӑна малалла яман. Çав вӑхӑтра паттӑрсен пӗчӗк ушкӑнӗ пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе 100 нимӗçе яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ. Пырса çитнӗ подкрепленисем вара фашистсене хӑйсен малтанхи позицийӗсем патне хӑваласа янӑ.

Каялла тытса илнӗ çуртсемпе урамсенче пирӗн боецсем гитлеровецсем пирӗн йывӑр аманнӑ воинсене тискеррӗн асаплантарнӑ йӗрсене тупаççӗ. Красноармеецсем кӗçӗн лейтенантӑн Глазковӑн виллине тупнӑ. Фашистсем ӑна палламалла мар хуçкаласа-таткаласа пӗтернӗ, пуçӑммине шӑтарнӑ, ура сыпӑкӗсене хускатнӑ, ӳтне çунакан шӗвек сапса çунтарса янӑ.

Сталинграда хӳтӗлекенсем фашистла ирсӗрсене пӗр шеллемесӗр тавӑраççӗ. Вӗсене курайманни нихӑçан пӗтсе ларас çук. Совет халӑхӗ нимӗçсем Сталинград районӗнче мӗн тунине нихӑçан та манмӗ, вӗсене нихӑçан та каçармӗ.

Д. ЩУКИН.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Сентябрӗн 25-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Моздок** районӗнче тата **Синявино** районӗнче хаярран ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сентябрӗн 24-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 45 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, полевой артиллерин 6 батарейине, минометсен 6 батарейине тата зенитнӑй пулеметсен 17 точкине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине 5 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче противник пирӗн войскӑсен боевой речӗсем ҫине артиллерипе тата минометсемпе таттисыпписӗр персе тӑнӑ. Пирӗн подразделенисем, нимӗҫсем хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, пӗр усӑллӑ позицие йышӑннӑ. Ҫав ҫапӑҫура 200 гитлеровеца ҫити вӗлерпӗ, 10 автомашина, 24 лав тата боеприпассен складне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн боецсем 3 пулемет, пӗр миномет, винтовкӑсем тата боеприпассем тытса илнӗ. 64-мӗш мотоциклетно-стрелковӑй батальонран тыткӑна илнӗ салтак Иоганн Фриндт ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн ротӑра 4 офицер тата 200 салтака яхӑн пулнӑ. Сталинград патӗнче 10 кун хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн ротӑра мӗнпурӗ те 30 салтак та пӗр офицер кӑна тӑрса юлнӑ. Ыттисем вилсе пӗтнӗ, аманнӑ е тыткӑна парӑннӑ».

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем активлӑн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсем фронтӑн ҫавӑнти участокне вӑскаса ҫӗнӗ резервсем илсе-илсе пыраҫҫӗ, контратакӑсем тӑваҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн Н-ски соединенийӗ пӗр кун хушшинче гитлеровецсен 3 атакине сирсе янӑ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 ҫынна ҫити вӗлернӗ, 12 танк, 20 оруди, 9 станковӑй пулемет тата 10 миномет пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнисем пур. Тепӗр участокра пирӗн танкистсем нимӗҫсен 5 танкне тата 5 бронемашинине персе ҫӗмӗрнӗ, 4 оруди, 6 тягач, минометсен 2 батарейине тата гитлеровецсене пӗр рота ытларах пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаҫсем гитлеровецсен атакисене сире-сире янӑ. Н-ски соединенин боецӗсем противникпа 4 кун хушши ҫапӑҫса нимӗҫ пехотин пӗр батальонне пӗтерсе тӑкнӑ, 12 танк, 4 бронемашина, 5 автомашина, 7 пулемет тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсем пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн автоматчиксен ушкӑнӗ нимӗҫсен 60 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Гвардеец-красноармеец Зотин юлташ нимӗҫсен танкӗ патне шуса пынӑ та, уҫса хунӑ люка граната ҫыххи вӑркӑнтарса, машинӑна экипажӗ-мӗнӗпех сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Новороссийскран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем 3 кун хушшинче тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 2.000 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, вӑл шутра 2 полковника вӗлернӗ. Нимӗҫсенчен 10 станковӑй пулемет, 12 миномет, 1.000 винтовка ытла тата боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Синявино районӗнче противник темпҫе хутчен контратака тунӑ. Пысӑк ҫухатусем тӳссе, нимӗҫсем пирӗн пӗр часть тӑракан вырӑна савӑлланса кӗрсе кайма пултарнӑ. Пирӗн боецсем хирӗҫ пырса ҫапса, противник малалла каяссине чарса лартнӑ. Халӗ пирӗн боецсем гитлеровецсен ҫав ушкӑнне пӗтерсе лартасшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ.

* * *

Итальянецсен «Эфорцеска» ятлӑ дивизийӗнчи 54-мӗш полкӑн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Джиованни Диалла ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ Российӑна ҫитни 3 уйӑх ӗнтӗ. Юлашки ҫапӑҫура вырӑссен артиллерийӗпе миномечӗсем пире питех те пысӑк ҫухатусем тӳстерчӗҫ. Полкра 1.000 ҫынна яхӑн кӑна юлчӗ. Ыттисем пурте вилсе пӗтнӗ е аманнӑ. Муссолини итальянецсене Гитлера сутса Российӑра вӗлерсе пӗтерме хуса ячӗ, ҫавӑншӑн эпӗ ӑна кураймастӑп».

* * *

Белорусс ССР-ӗнчи Слобода ялӗнче нимӗҫсен ҫар коменданчӗ Шклер халӑха 3 кун хушшинчи срокра комендатурӑна пырса 10 кӗрӗк, 5 тӑлӑп, 10 мӑшӑр ҫӑматӑ, 20 ҫуна тата мӗнпур йӗлтӗрсене пурне те пама хушнӑ. Хресченсем ҫав приказа пурнӑҫлама килӗшмен, вӗсем ҫапла каланӑ: нимӗҫ салтакӗсем мӗнпур ӑшӑ япаласене пӗлтӗрех илсе пӗтерчӗҫ, тенӗ. Виҫӗ кунлӑха панӑ срок иртсен, яла эсэсовецсен карательнӑй отрячӗ персе ҫитнӗ те хресченсене тискеррӗн тыткала пуҫланӑ. Ял варринче пӗтӗм халӑх куҫӗ умӗнче гитлерла ирсӗрсем 8 колхознике, вӑл шутра 64 ҫулхи Влас Савчука, 52 ҫулхи Лука Богдановича, тӑватӑ ача амӑшне Варвара Черныха тата ыттисене те, персе пӑрахнӑ. Хресченсене нумайӗшне, вӑл шутра хӗрарӑмсемпе пӗчӗк ачасене те, эсэсовецсем хӑйсемпе пӗрле хӑваласа кайнӑ.

Сентябрӗн 26-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Сентябрӗн 26-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Моздок** районӗнче тата **Синявино** районӗнче ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сталинград районӗнче хаяр ҫапӑҫсем пынӑ. Урамри вӑйлӑ ҫапӑҫура пирӗн гвардейски часть нимӗҫсен 10 танкне тата противникӑн 285 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем нимӗҫсен атакине сирсе янӑ, противникӑн пехотине пӗр ротине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 6 миномет, 130 винтовка тата боеприпассем тытса илнӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем тӑшмана хирӗҫ контратакӑсем тӑваҫҫӗ. Н-ски стрелковӑй часть 300 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата 2.000 патрон тытса илнӗ. Тепӗр участокра Н-ски соединенин боецӗсем противникӑн контратакине сирсе янӑ та [illegible]. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсен 600 салтакӗпе офицерне, 10 танкне, 12 орудине тата темиҫе миномечӗпе пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн пехотипе танкӗсен атакине сирсе янӑ. Нимӗҫсем хӑйсен малтанхи позицийӗсене [illegible] 6 танк, 10 автомашина, 7 орудие, 13 пулемет тата пӗр пехота ротине ҫухатса чакнӑ. [illegible]

* * *

Новороссийскран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем румынсен пехотине [illegible] пӗтерсе тӑкнӑ. [illegible]

* * *

Аллахра [illegible] нимӗҫсен 211-мӗш [illegible] 317-мӗш полкӑн 9-мӗш ротине [illegible] командирӗн Франц Гарцерӑн дневникӗнчен хӑшпӗр вырӑнсене илсе пичетлетпӗр.

«Вырӑссен вӑрмансенче хирӗҫ тӑракан ушкӑнӗсене пирӗн тытса илмелле. Питӗ лайӑх маскировка туса, вӗсем пирӗн вӑрман хӗрринче пухӑнса тӑнӑ салтаксем ҫине переҫҫӗ. Сасартӑк вырӑссен «Урра» тени янӑраса кайрӗ. [illegible] Батальон [illegible] каялла чакнӑ. Операци пӑчланса ларчӗ. Шейлер лейтенант аманнӑ, Крише, Гросс, Веймер унтер-офицерсем вилнӗ. [illegible] Гинсберг пӗр хыпарсӑр ҫухалнӑ. Ҫакӑ вӑл 9-мӗш ротӑн историйӗнче чи [illegible] кунсенчен пӗри пулчӗ. [illegible] Манӑн кунтан часрах тухса каяс килет.

...Пирӗн ҫак чаҫ-часах «1942 ҫулхи мина шыраҫисем» ҫинчен шӳт туса калаҫаҫҫӗ. [illegible]

...Хӑрушӑ ҫӗнӗ хыпарсем: Гельм, Глеба, Вальк, Винклер унтер-офицерсем вилнӗ. Аманнисем питӗ нумай. [illegible] Россия пирӗншӗн [illegible] тесе шутлатӑп эпӗ».

* * *

Кировоград облаҫӗнчи Анновка ялӗнче Науменко колхозникӗн 7 ҫулхи [illegible]

* * *

Грек партизанӗсен Родоп тӑвӗсенче (Ҫурҫӗр Грецире) кӗрешекен отрячӗ оккупантсен автоколоннине тапӑннӑ. Партизансем 30 гитлеровеца ҫити пӗтернӗ, [illegible]

„Фронт“ кинофильм

А. Корнейчук драматург хӑйӗн «Фронт» ятлӑ пьеси тӑрӑх художестваллӑ фильм сценарийне ҫырса пӗтернӗ. ССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи кинематографи комитечӗ [illegible] фильма лартма Г. тата Д. Васильев режиссерсене—«Чапаев», «Волочаевские дни», «Оборона Царицына» фильмсен постановщикӗсене хушнӑ. «Фронт» картинӑна пӗрлештернӗ центральнӑй киностудире Алма-Ата хулинче ӳкерӗҫҫӗ. (ТАСС).

Шупашкар хула Совечӗн сессийӗ

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче Ӗҫсыннн депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн XVII сессийӗ пулса иртрӗ. Пурӑнмалли ҫуртйӗрсене хӗле хатӗрлесси ҫинчен хула Совечӗн исполком председателӗн заместителӗ Астин юлташ доклад туса пачӗ. Вӑл хӑйӗн докладӗнче хулари пурӑнмалли ҫуртйӗрсене юсасси ҫинчен каларӗ тата хӗле хатӗрленес ӗҫе мӗнпур ӗҫсыннисен хутшӑнма кирлине палӑртрӗ. Уйрӑм ҫуртсене унта пурӑнакансемех хӗле хатӗрлени ҫинчен каларӗ. Сӑмахран, Красноармейски урамри 29-мӗш номерлӗ ҫуртра пурӑнакансем хӑйсен вӑйӗпех ҫурт ҫийне юсанӑ, кӑмакасене ҫӗнӗрен тутарнӑ, хӳмесене тӳрлетнӗ. Ку ӗҫре ытти хӑшпӗр ҫуртсенче пурӑнакансем те хӑйсен пуҫарулӑхне кӑтартнӑ, вӗсем ҫӗмрӗк кантӑксене лартнӑ, вутӑ хатӗрленӗ. Анчах ҫакӑн пек лайӑх примерсене ытти ӗҫсыннисем хушшине сарман-ха. Паянхи куна ҫуртйӗрсене хӗле хатӗрлес ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать. Нумай ҫуртсенче пурӑнакансем вӗсен ҫурчӗсене хула совечӗн жилищнӑй управленийӗ юсаса парассине кӗтсе лараҫҫӗ. Унтан та ытларах уйрӑм ҫуртсене вӗсенче пурӑнакансемех юрӑхсӑра кӑлараҫҫӗ. Карл Маркс урамӗнче учительсемпе профессорсен ҫурчӗ пур. Ҫак ҫуртӑн ӑшӑ ҫӳремелли трубисене ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Ҫав урамри 28-мӗш номерлӗ ҫуртӑн чӳречисем ванчӑк, алӑкӗсем ишӗлсе пӗтнӗ. Хула совечӗн жилищнӑй управленийӗ, ҫуртсен управляющийӗсемпе коменданчӗсем ҫуртйӗрсене хӗле хатӗрлес тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ.

Кӑҫал 20 ҫурта капитальнӑй ремонт тума палӑртнӑ, укҫа панӑ. Анчах паянхи куна 6 ҫурта кӑна юсанӑ. Центральнӑй отоплениллӗ ҫуртсене валли пӗр сыпӑ вутӑ та турттарса хатӗрлемен. Жилуправленипе ремонтнӑй контора ҫуртйӗрсене юсас тӗлӗшпе ответлӑха туймаҫҫӗ.

Хула валли вутӑ хатӗрлеме ӗҫсыннисене анлӑн хутшӑнтарнӑ. ЧАССР Совнаркомӗ вутӑ касса хатӗрлеме панӑ задание паянхи куна 61 процент пурнӑҫланӑ. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн, Сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссариачӗн, Госпланӑн коллективӗсем вутӑ хатӗрлемелли заданисене ирттерсех тултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах чылай организацисемпе учрежденисен коллективӗсем (Главснабторг, Крахмалтрест, Заготсено т. ыт. те) вутӑ каснӑ ҫӗрте питех те сахал ӗҫленӗ. Вутӑ турттарса килес ӗҫ начар тӑрать. Предприятисемпе учрежденисен руководителӗсем хӑйсен общежитийӗсене юсасси ҫине ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ.

Пренире депутат Круглов, жилуправлени начальникӗ Колбасов, хула ҫарӗҫ комиссарӗ Моргунов, хула Совечӗн сывлӑха сыхлав ӗҫ пайӗн заведующийӗ Арзамасцева, ВКП(б) хула комитечӗн секретарӗ М. Романова юлташсем тухса каларӗҫ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче хулари пурӑнмалли ҫуртйӗрсене хӗле хатӗрлес ӗҫри ҫитменлӗхсем ҫинче чарӑнса тӑчӗҫ, ҫак ӗҫе лайӑхлатас тесен мӗн тумаллине кӑтартса пачӗҫ.

Хула Совечӗн сессийӗ хулари ҫуртйӗрсене юсамалли плана пурнӑҫласишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеме кирлине палӑртрӗ..

Хула совечӗн сессийӗ организациллӗ ыйтусене пӑхса тухрӗ. И. И. Золотников юлташ урӑх ӗҫе куҫнӑ пирки сесси ӑна хула Совет исполкомӗн председателӗнчен хӑтарчӗ. Сесси хула Совет исполкомӗн председателӗн ӗҫӗсене вӑхӑтлӑха туса пыраканӗ пулма Ф. А. Климов юлташа суйларӗ, хулари ҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ пулма Е. Е. Кузнецова юлташа ҫирӗплетрӗ.

Уяв парнисем хатӗрлеҫҫӗ

ҪЕРПУ. **(Телефонпа).** Шупашкар районӗнчи «Молния» колхозӑн колхозникӗсем Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарнӑ ятпа Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем ярса пама чӗннине Ҫӗрпӳ районӗнчи нумай колхозсенче сӳтсе-явса ырларӗҫ. Сентябрӗн 25-мӗшӗнче «Кульмет» колхоз (председателӗ Матвеев юлташ), Федоров садовод йӗркеленипе, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем яма 400 килограмм купӑста, 100 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 10 килограмм пыл, 50 ҫӑмарта, 3 чӑх, 32 килограмм сухан, 30 килограмм кишӗр, 100 литр сӗт т. ыт. те пухса пачӗ. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли уяв парнисем ярас ӗҫе ытти колхозсенче те тытӑннӑ.

А. ФЕДОРОВ.

* * *

КАЛИНИНО. **(Телефонпа).** Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем патне парнесем ярасси ҫинчен Шупашкарти чӑлха ҫыхакан фабрикӑри рабочисемпе работницӑсем чӗнсе каланине ӗҫсыннисене ӑнлантарса парас ӗҫ районра анлӑн сарӑлса пырать. Ҫак ӗҫе коммунистсемпе комсомолецсем тата партире тӑман агитаторсем чылайӗшӗ хутшӑнчӗҫ. Уйрӑм колхозсенче чӑлха фабрикинче ӗҫлекенсен чӗнӗвне колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗсенче сӳтсе-явнӑ та ӗнтӗ.

Ҫав чӗнӗве сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн «Смычка» колхозра (председателӗ П. Ландышев юлташ) Октябрь парнисем шучӗпе 20 килограмм сысна какайӗ, 10 чӑх какайӗ, 2 сысна ҫӳри какайӗ (типӗтсе), 100 килограмм типӗтнӗ ҫӗрулми, 40 килограмм шурӑ сухари, 3 литр эрех, 10 килограмм пыл яма йышӑннӑ.

Кусемсӗр пуҫне, колхоз членӗсем 30 посылка туса чӑлхасем, енчӗксем тата ытти япалсем ярса пама хатӗрленеҫҫӗ.

Колхозниксем ҫав парнесене октябрӗн 2-мӗшӗ тӗлне хатӗрлесе ҫитерме шутлаҫҫӗ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли—ӑшӑ тумтирсем

КАЛИНИНО. Районри ӗҫсыннисем нумайӗшӗ Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем валли ӑшӑ тумтирсем хатӗрлеҫҫӗ.

—Мӗнпур вӑя Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма, тӑшмана ҫапса аркатма!—тенӗ лозунгпа Кӑкшӑмри «Знамя труда» колхоз членӗсем ӑшӑ тумтирсем пухаҫҫӗ. Вӗсем паянхи куна 3 кӗрӗк пиншак, 18 тир, 4 ҫӗлӗк, 3 ваткӑллӑ шалавар, 9 кӗпе, простыня тата ытти япаласем те пухса панӑ. Элменти Пушкин ячӗпе тӑракан колхозра 19 тир, 24 килограмм ҫӑм, 5 мӑшӑр алшиш, 24 метр пир, Ермошкӑри Калинин ячӗпе тӑракан колхозра 3 кӗрӗк пиншак, 5 тир, 27 килограмм ҫӑм, 7 мӑшӑр носки, 2 ҫӗлӗк тата ытти япаласем те пухнӑ. Мӑн Явӑшри Ленин ячӗпе тӑракан, Алгазинӑри «Чӑваш Коммуни», Ҫавалкассинчи «Ҫутталла» колхоз членӗсем те ӑшӑ тумтирсем пухма тытӑннӑ.

Кашни кунах районри комисси складне боецсем валли ӑшӑ тумтирсем тиенӗ лавсем пырса тӑраҫҫӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем вӑл тумтирсем ӑшне боецсем патне ӑшӑ саламсем ҫырнӑ хут татӑккисем чиксе праҫҫӗ.

Районри комисси складне 31 кӗрӗк пиншак, 292 тир, 316 килограмм ҫӑм, 51 ҫӗлӗк, 12 фуфайка, 8 шалавар, 9 ӑшӑ кӗпе, 6 джемпер, 10 мӑшӑр ҫӑм носки, 14 мӑшӑр алшиш, 57 мӑшӑр кӗпе-йӗм, 85 алшӑлли, 39 простыня т. ыт. те пырса панӑ.

Г. МАТВЕЕВ.

Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ

Унӑн ашшӗ-амӗш,
Хурӑнташӗ,
Ҫывӑх тӑванӗсем —
Вирьялсем.
Вирьял юнӗ вӗри,
Ҫӑлкуҫӗ пек
Вӗренӗ ун чӗри
Патӗнче.

Ӑна ача чухне
Совет влаҫӗ
Хӳтӗленӗ ача
Ҫуртӗнче.
Ҫулпуҫсен ячӗпе
Паллаштарнӑ,
Шурӑмпуҫ ҫуттипе
Чысланӑ.

Унӑн юлташӗсем
Нумай пулнӑ.
Тӗрлӗрен вӑйӗсем
Вылянӑ.
Илемлӗ картинсем
Эрешленӗ,
Хаваслӑх юррисем
Юрланӑ.

Тӑлӑх ача ҫулне
Детдом уҫнӑ,
Совет мелечӗпе
Лӑпканӑ.
Пӑхса ӳстернӗшӗн
Ачасем те
Юратнӑ чӗререн
Совета.

Совет ҫӗршывӗнче
Ҫапла пирӗн
Тӑлӑх ачасем те
Хӗрӳллӗн
Ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ
Хӗпӗртесе,
Аслӑлӑх илеҫҫӗ
Вӗренсе.

Совет Союзӗн
Геройӗ те
Ҫапла ӳснӗ,
Ҫапла ӳснӗ Вирьял
Ывӑлӗ.
Тӑлӑхчӗ вӑл ача
Кун-ҫулӗнче
Паттӑр пулчӗ тӗнче
Вӑрҫинче.

Халӗ батальоннӑй
Комиссар вӑл,
Ҫӗнтерӳсем тума —
Аслӑ ҫул.
Фашистсене кӑклать
Тӑпӑлтарса,
Аҫа ҫапса ҫумӑр
Ҫутарса.

Акӑ ӑна мӗншӗн
Парнеленӗ
Ылттӑн ҫӑлтӑр, Ленин
Орденӗ.

Ӗҫӗ ун хӑватлӑ,
Ячӗ чаплӑ.
Сывӑ пултӑр герой
Васильев.

Н. И. ШЕЛЕБИ,
Халӑх поэчӗ-орденоносец.

Ют ҫӗршывсенче

Совет халӑхне янӑ саламсем

Ирландипе Америкӑн оборона комитетӗнчен Сталин юлташ ячӗпе ҫакӑн пек телеграмма килнӗ:

Ирландире ҫуралса Америкӑра пурӑнакан миллионшар ҫынсем вырӑс халӑхӗ вырӑс ҫӗрӗшӗн кӗрешнипе хӗпӗртеҫҫӗ. Эпир тата ытти мӗнпур Америка пирӗн пӗрлехи тӑшмана аркатса тӑкма хатӗрленетпӗр. Россия тӳсекен асапсем часах вырӑс халӑхӗ хутран-ситрен аса илмелли япала ҫеҫ пулса тӑрӗҫ. Пулӑшу парасси ҫывӑх. Америка мӗнпур вӑя халӑхсемпе мӗнпур ҫынсен естественнӑй прависене хисеплемелле тӑвас ӗҫе ярать.

ФРАНСИС МКНЭН.
Ирландипе Америкӑн оборона комитечӗ.

* * *

Торонто хулинчен Канадӑри тред-юнионсем «пурте вӑрҫӑ валли» тенӗ ятпа пухнӑ 18 пин ҫынлӑ митингран Сталин юлташ ячӗпе ҫакӑн пек салам килнӗ:

Канадӑри профсоюзсем Мейпл Лиф Гарденс хулинче «пурте вӑрҫӑ валли» тенӗ ятпа тунӑ митинга совет студенчӗсен делегацине саламлама пухӑннӑ 18 пин ҫын Сире чи хӗрӳллӗ салам ярасҫӗ тата Сире ҫакӑн ҫинчен шантарса калаҫҫӗ: Хӗвеланӑҫӗнче иккӗмӗш фронт часрах уҫмашкӑн тата этемлӗхӗн тӑшманне пӗрлешнӗ вӑйпа ҫапса аркатмашкӑн эпир хамӑр мӗн тума пултарнине пурне те тӑвӑпӑр, теҫҫӗ.

Сталинграда паттӑррӑн хӳтӗлекенсене тата хастарлӑ совет халӑхне пиртен салам калӑр.

СУЛЛИВЭН
Канадӑри тред-юнионсен конгресӗн председателӗн заместителӗ.

Пӗрлешӳллӗ Штатсем тата кӗрешекен Франция тунӑ килӗшӳ

ЛОНДОН, сентябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Францин нациллӗ комитечӗн пичет бюровӗ ҫапла пӗлтерет: Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата кӗрешекен Францин тинӗс влаҫӗсем кӗрешекен Францин сывлӑшрипе тинӗсри вӑйӗсем Америкӑн тинӗсри флочӗпе ҫыхӑнса кӗрешес тӗлӗшпе килӗшӳ тунӑ. Ҫав килӗшӳ тӑрӑх, кӗрешекен Францин тинӗс ҫинчи авиацийӗн отрячӗ Америкӑн тинӗс ҫинчи авиацийӗпе пӗрле кӗрешмелле, унтан вӑл Пӗрлешӳллӗ Штатсем панӑ самолетсемпе пӗрле французсен сывлӑшри соединенийӗ пулса тӑмалла, ҫав соединенин пӗрлешнӗ ҫӗршывсен тинӗс ҫинчи авиацийӗпе пӗрле кӗрешмелле.

ИТАЛИ ЖУРНАЛӖ ФРАНЦИПЕ ИТАЛИ ХУШШИНЧИ ҪЫХӐНУСЕМ ҪИНЧЕН

ЛОНДОН, сентябрӗн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрихран ҫапла пӗлтерет: Италин «Реляциони интернационали» ятлӑ официальнӑй журналӗ, Виши правительстви Германипе килӗштерсе ӗҫлени ҫинчен каласа, ҫапла ҫырать: ку вӑл «Италие хирӗҫ ӗҫлеме ирӗклӗх илмелли маневр пулса тӑрать», тет. Журнал малалла ҫапла ҫырать:

«Франципе Италия пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси вилӗ саспалли пулса тӑрать. Францин обществӑллӑ шухӑшӗ Италие хирӗҫ пырать. Правительствӑри ҫынсем Италие ҫавӑн пек курайманнине чарса лартмашкӑн нимӗн те тумаҫҫӗ, мӗншӗн тесен Италие официальнӑй ҫынсем те ҫавӑн пекех кураймаҫҫӗ. Виши правительствин тӗллевӗсенчен пӗри—Итали ӗмӗчӗсене [illegible] кӗртессине ултавлӑ майпа [illegible] пулса тӑрать», тет.

ГЕРМАНИ ШПИОНАЖӖ ҪУРҪӖР ИРЛАНДИРЕ

ЛОНДОН, сентябрӗн 23-мӗшӗ. (ТАСС). «Ивнинг стандард» хаҫатӑн корреспонденчӗ Ольстерте (Ҫурҫӗр Ирландире) Германин шпионла организаци пурри ҫинчен пӗлтерет. Эйре чикки урлӑ Ҫурҫӗр Ирландие гитлерла агентсем сӑрхӑнса кӗрсе каяҫҫӗ, ҫакӑ вӑл шпионажа вӑйланма пулӑшать. Тӗрӗслени ҫакна кӑтартнӑ: Америкӑн ҫар лагерӗсем ҫывӑхӗнче тытнӑ ҫынсенчен нумайӗшӗ Германин Дублинри миссийӗпе ҫыхӑнса тӑнӑ. Америкӑн икӗ генералӗпе нумай офицерӗсем корреспондента ҫапла каласа панӑ: нимӗҫсем Ҫурҫӗр Ирландире Америка войскисем ӑҫта вырнаҫса тӑни ҫинчен хыпарсем пухаҫҫӗ, тенӗ. Контрразведка ӗҫӗсене нейтралитет тытса тӑракан Эйрере туса тӑма ҫук пирки шпионажпа кӗрешме йывӑртарах.

Франците заложниксене массӑллӑн асаплантарса вӗлерни

НЬЮ-ИОРК, сентябрӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви каланӑ тӑрӑх, нимӗҫсен оккупациллӗ влаҫӗсем Бордо хулинче 70 заложнике асаплантарса вӗлерни ҫинчен пӗлтернӗ. Официальнӑй сведенисем тӑрӑх, юлашки эрнере гитлеровецсем Франципе мӗнпурӗ 186 ҫынна асаплантарса вӗлернӗ.

Гитлерла чура хуҫисем рабочисене ҫӗнӗрен ирӗксӗр мобилизацилеме хатӗрленеҫҫӗ

ЖЕНЕВА, сентябрӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Гитлеровецсем оккупациленӗ мӗнпур ҫӗршывсемпе вассалла ҫӗршывсенче рабочисене ирӗксӗр мобилизациленӗ пулсан та, Германи промышленноҫӗпе ялхуҫалӑхӗнче рабочисем ӗлӗкхи пекех питӗ нумай ҫитмеҫҫӗ. Рабочисем ҫитменни Лаваль Гитлер хушнӑ тӑрӑх Германие 350 пин француз рабочие мобилизацилесе яма хӑтланни пӑчланса ларнӑ пирки уйрӑмах ҫивӗчленсе кайнӑ. Ҫавӑнпа гитлерла чура хуҫисем оккупациленӗ ҫӗршывсемпе вассалла ҫӗршывсене ҫӗнӗрен хӗсме хатӗрленеҫҫӗ. Гитлерла «Франкфуртер Цейтунг» хаҫат ҫакна астутарать: «Ҫитес вӑхӑтра Европӑри мӗнпур ҫӗршывсенче рабочисен резервӗсене мобилизацилеме тытӑнмалла», тет. Ҫакна тунӑ чухне оккупациленӗ ҫӗршывсемпе вассалла ҫӗршывсен хӑйсен нушисене шута илес ҫуккине хаҫат тунмасть. Вӑл ҫав ҫӗршывсенче нумайтарах рабочисене ӗҫрен хӑтарас тесе ӗҫ кунне тӑсма чуралла системӑна вӑйлатма хушать. «Европӑра ниҫта та канлӗ пурнӑҫ оазисӗсем пулмалла мар»,—тесе ҫырать хаҫат.

Индири государственнӑй советӑн ларӑвӗнче

НЬЮ-ИОРК, сентябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Индири государственнӑй советӑн ларӑвӗнче государственнӑй советӑн лидерӗ Усман ҫапла каласа панӑ: августӑн 19-мӗшӗнчен пуҫласа, урӑхла каласан халӑх хумханма тытӑннӑран вара, полиципе войскӑсем 721 ҫынна вӗлернӗ, 1.200 ҫынна амантнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче 40 поезд крушени тӳснӗ.

ЛОНДОН, сентябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Индири государственнӑй советӑн ларӑвӗнче государственнӑй советӑн ҫак членӗсем тухса каланӑ: Хуссайн, независимӑйсен группин представителӗ, Махта, Менон, муссульмансен лигин представителӗ Падшах. Падшах правительствӑна вӑл конгреса мала хунӑ, муссульмансен лигине пӗрех те шута илмен тесе айӑпланӑ.

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Вниманию сельсоветов и колхозов, имеющих телефонные установки.

Радиокомитет при СНК Чувашской АССР ставит в известность, что согласно постановлению Совнаркома ЧАССР ежедневно по сельским телефонным проводам передаются следующие радиопередачи: (время местное)
с 7.35 до 7.58—Передачи из Чебоксар, состоящие из следующих материалов:
а) Постановления партийных и советских органов (на русском и чувашском языках);
б) Сообщения Советского Информбюро (на чуваш. языке)
в) Боевые эпизоды с фронтов отечественной войны (на чувашском языке);
г) Союзная и иностранная Информация ТАСС (на чувашском языке);
д) Выступление руководящих работников и передовиков промышленности, транспорта и с/х. (на русском и чувашском языках);
е) Корреспонденции из районов Чувашской АССР (на русском и чувашском языках).
8.00— 8.14—„Последние известия“ из Москвы (утренний выпуск).
20.00—20.14—„Последние известия“ из Москвы (вечерний выпуск).

РАДИОКОМИТЕТ ПРИ СНК ЧАССР

ЧЕБОКСАРСКОМУ ПУНКТУ ЗАГОТЗЕРНО срочно требуется шофер для работы на грузовой автомашине. Оплата по соглашению.
ДИРЕКЦИЯ.

НАРКОМСОБЕС ЧАССР доводит до сведения инвалидов, что выездная бригада протезной мастерской будет работать 1, 2 и 3 октября 1942 года в гор. Чебоксарах.
Бригада будет обслуживать инвалидов отечественной войны следующих районов: Козловский, Марпосадский, Чебоксарский, Ишлейский, Сундырский и Октябрьский.
Нуждающиеся в протезах инвалиды отечественной войны заблаговременно должны обращаться за нарядами в райсобесы по местожительству.
Лица, имеющие на руках наряды из вышеуказанных районов должны явиться только в указанные сроки.
НАРКОМСОБЕС.

ЧЕБОКСАРСКИЙ КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ ОБ'ЯВЛЯЕТ, что занятия в техникуме начнутся 1 октября К указанному сроку должны явиться все студенты II, III и IV курсов, а также лица, подавшие заявления на 1-й курс.
Неявившиеся к указанному сроку будут отчислены из техникума.
ДИРЕКЦИЯ.

ЧУВАШПРОМСТРАХКАССЕ ТРЕБУЕТСЯ бухгалтер-ревизор, знакомый с работой по взаимному страхованию системы промысловой кооперации. С предложением обращаться: г. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, дом № 21. Телефон 6—79, два звонка.
ЧУВАШПРОМКАССА.

На основании постановления Президиума Чувашпотребсоюза Канашская Сырьевая база ЛИКВИДИРУЕТСЯ. Претензии будут приниматься в десятидневный срок со дня опубликования в газете.
ЛИКВИДКОМ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 938 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 24 п. н.